26-мĕш ҫул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
ИЮНЬ
9
ЮНКУН
19(6356) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАҪАЧĔ

Ҫураки вăхăтĕнче пысăк ĕҫ тухăҫлăхĕ тата лайăх пахалăх кăтартса ĕҫленĕшĕн, ĕҫҫынни депутачĕсен райсовет исполкомĕсемпе ВКП(б) райкомĕсем тăратнă тăрăх, ялхуҫалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми ҫине ҫаксене кĕртнĕ:

Элĕк районĕ тăрăх:

141. Хирлеппуҫ ялсоветне кĕрекен **«Заветы Ильича» колхоз** (председателĕ **И. Н. Карпов**). Колхоз ҫураки ĕҫĕсене пысăк пахалăхпа 12 кун хушшинче туса пĕтернĕ, ҫураки планне 108 процент пурнăҫа кĕртнĕ. Кĕрхи тырăсен калчисене планпа кăтартса панă 7 гектар вырăнне 15 гектар ҫинче апат панă.

142. Пиҫенер ялсоветне кĕрекен **Комсомолăн IX съезчĕ ячĕпе** тăракан колхоз (председателĕ **М. И. Петров**). Колхоз ҫураки планне 105 процент пурнăҫа кĕртнĕ.

143. Ехремкасси ялсоветне кĕрекен **«Первое мая» колхоз** (председателĕ **С. П. Горшков**). Колхоз ҫураки ĕҫĕсене пысăк пахалăхпа 31 кун хушшинче туса пĕтернĕ. Оборона фончĕ валли планран ирттерсе 6 гектар акса хăварнă.

144. Яргуньккино ялсоветне кĕрекен **«Маяк» колхоз** (председателĕ **С. Ф. Филимонов**). Колхоз ҫураки ĕҫĕсене пысăк пахалăхпа 14 кун хушшинче туса пĕтернĕ, ҫураки планне 107 процент пурнăҫа кĕртнĕ. Оборона фончĕ валли планран ирттерсе 15 гектар акса хăварнă.

145. Исванка ялсоветне кĕрекен **«Новая сила» колхоз** (председателĕ **Александров** юлташ). Колхоз ҫураки ĕҫĕсене пысăк пахалăхпа 13 кун хушшинче туса пĕтернĕ. Оборона фончĕ валли планран ирттерсе 11 гектар акса хăварнă.

146. Татмăш ялсоветне кĕрекен **«Большевик» колхоз** (председателĕ **К. А. Артемьев**). Колхоз ҫураки ĕҫĕсене пысăк пахалăхпа 14 кун хушшинче туса пĕтернĕ, ҫураки планне 105 процент пурнăҫа кĕртнĕ. Оборона фончĕ валли планран ирттерсе 20 гектар акса хăварнă.

147. Элĕк ялсоветне кĕрекен **Киров ячĕпе тăракан колхоз** (председателĕ **В. Ф. Федотов**). Колхоз ҫураки ĕҫĕсене пысăк пахалăхпа 12 кун хушшинче туса пĕтернĕ, ҫураки планне 105 процент пурнăҫа кĕртнĕ. Оборона фончĕ валли планран ирттерсе 5 гектар акса хăварнă.

148. Тавăт ялсоветне кĕрекен **«Сталинит» колхоз** (председателĕ **Емельянов**). Колхоз ҫураки ĕҫĕсене пысăк пахалăхпа 15 кун хушшинче туса пĕтернĕ. Оборона фончĕ валли планран ирттерсе 13 гектар акса хăварнă.

Выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем хатĕрлес ĕҫе хăвăртлатар!

Халĕ выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем хатĕрлес ĕҫĕн хĕрÿ тапхăрĕ. Чăваш республикинчи малта пыракан колхозсемпе колхозниксен хуҫалăхĕсем тăван ҫĕршывпа фронт валли сĕт-ҫу, çăмарта, аш-какай йĕркеллĕ парса тăма тăрăшаҫҫĕ.

Анчах, пĕтĕмĕшпе илсен, выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем хатĕрлес ĕҫ республикăра сÿрĕк пулса пырать-ха. Июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне республика государствăна 1943 ҫулшăн выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем памалли обязательствăсене сĕт-ҫу енĕпе 21,4 процент, ҫăмарта енĕпе 19,6 процент, брынза енĕпе 1,9 процент ҫеҫ тултарнă. Аш-какай памалли обязательствăсене те 40,9 процент ҫеҫ пурнăҫланă.

Выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем хатĕрлевĕсем ҫакнашкал сÿрĕк пынă пирки, пирĕн республика халĕ тăван ҫĕршыва фронт умĕнче пысăк парăмра тăрать. Халĕ, ҫĕршыв питех те йывăр кунсене пурăнса ирттернĕ вăхăтра, государство умĕнче ҫакнашкал парăмра пулни килĕшÿсĕр, ăна тÿссе тăма ҫук.

Сĕт-ҫу хатĕрлес енĕпе республикăра уйрăмах Кувакино, Шăмăршă, Красноармейски, Сĕмĕрле, Йĕпреҫ, Шăхасан районĕсем юлса пыраҫҫĕ. Кувакино районĕ июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне сĕт-ҫу хатĕрлевĕн ҫулталикри планне 9 процент ҫеҫ тултарнă. Асăннă ытти районсем плана 12—14-шар процент ҫеҫ пурнăҫа кĕртнĕ.

Ҫăмарта хатĕрлес енĕпе те ҫÿлте асăннă районсемех тата Канаш, Октябрьски, Тăвай, Чкаловски районсем начар ĕҫлеҫҫĕ. Канаш районĕ (райуполнаркомзаг Порфирьев) июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне ҫăмарта хатĕрлевĕн ҫулталăкри планне 8,1 процент ҫеҫ тултарнă.

Брынза хатĕрлес ĕҫ республикăра пушшех те сÿрĕк пулса пырать. Йĕпреҫ, Канаш, Комсомольски, Шăмăршă, Хĕрлĕ Чутай, Сĕмĕрле, Шăхасан районĕсенче ку ĕҫе халĕ те пуҫăнман.

Хатĕрлев организацийĕсенче ĕҫлекенсем ку ĕҫри чăрмавсене «выльăх-чĕрлĕх апачĕ ҫителĕксĕр пулнипе» тата ытти хăшпĕр сăлтавсемпе ăнлантарма пăхаҫҫĕ. Ку пĕртте тĕрĕс мар. Кăҫал выльăх-чĕрлĕх апачĕ ҫителĕклех пулчĕ, халĕ те пур. Чăрмавĕ пачах урăххинче—хатĕрлев организацийĕсем тата вĕсен работникĕсем хăйсен ĕҫне вăрçă вăхăчĕ ыйтнă пек туса пыраймаххинче, ку ĕҫе ҫĕнĕлле организацилеменнинче, выльăх-чĕрлĕх продукчĕсене обязательствăсене тултаричченех ытти ҫĕре салатнинче, хатĕрлев работникĕсем чылайĕшĕ вăрçă йывăрлăхĕсене сĕнтерме тăрăшманнинче.

Чăнах, вăрçă хатĕрлев организацийĕсен ĕҫĕсене йывăрлатрĕ, вĕсен умне ҫĕнĕ ыйтусем чылай кăларса тăратрĕ. Уйрăмах хатĕрлев кадрĕсене суйласа илес задача йывăрланчĕ, мĕншĕн тесен хатĕрлев ĕҫĕнче нумай ҫулсем хушши ĕҫлесе пуян опыт пухнă работниксем—агентсемпе уполномоченнăйсем чылайĕшĕ ҫарта. Ҫĕнĕ кадрсем хатĕрлесси—ҫăмăл ĕҫ мар. Ҫак ĕҫе республикăри хăшпĕр хатĕрлев организацийĕсен руководителĕсем тивĕçлипе тăваймарĕҫ, кадрсене хăйсем патĕнче чылай вăхăт хушши ĕçлеме ҫирĕплетсе хăвараймарĕҫ. Ҫавна пула кадрсем тăтăшах улшăнса тăчĕҫ. Ҫакă вăл, паллах, хатĕрлев ĕҫĕнче сахал мар чăрмавсем кÿчĕ.

Тепĕр енчен хатĕрлев ĕҫĕсене тÿрремĕнех ертсе пыракан организацисем—Хатĕрлев Наркомачĕн Чăваш республикинчи Уполномоченнăйĕ, Маслопром управленийĕ тата Чăвашпотребсоюз хăйсен вырăнсенчи организацийĕсен ĕҫне начар контрольлесе тăраҫҫĕ, вĕсен ĕҫĕнчи чăрмавсене вăхăтра палăртмаҫҫĕ, вырăнти кадрсене суйласа илес, вĕсене хальхи вăхăт ыйтнă пек ĕҫлеме вĕрентес тĕлĕшпе ҫителĕксĕр ĕҫлеҫҫĕ. Чăвашмаслопром управляющийĕ Васильев юлташ, республикăра сĕт-ҫу, брынза хатĕрлес ĕҫсем пачах ҫителĕксĕр пыраҫҫĕ пулин те, ку ĕҫе хăвăртлатас тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнмасть-ха. Вăл районсен руководителĕсемпе тачăн ҫыхăнса ĕҫлеменни, «пĕтĕмĕшле» ертсе пыни сисĕнет.

Брынза хатĕрлесси пирки уйрăмăн чарăнса тăрас пулать. Ку вăл—йывăр та ответлă ĕҫ. Республикăри хатĕрлев организацийĕсем иртнĕ ҫул государствăна 34.534 килограмм брынза параймарĕҫ. Кăҫал та ҫурҫулти плана 3,7 процент ҫеҫ тултарнă. Хатĕрлев работникĕсемпе колхозсен руководителĕсем ку ĕҫе кирлĕ пек хакламаҫҫĕ. Хăшпĕр колхозсен председателĕсем брынза вырăнне государствăна выльăх-чĕрлĕхĕн ытти продукчĕсене парасси ҫине шанса пурăнаҫҫĕ. Ҫакă вăл—йăнăш туни пулать. Брынза—тăван ҫĕршывăн апатсимĕç базине ÿстермелли. Хĕрлĕ Сара лайăх пахалăхлă сĕт продукчĕ памалли ресурссенчен пĕри пулса тăрать. Ҫавна ăнланса илсе, колхозсен сурăхсене сăвас ĕҫе организацилемелле, июньпе июль уйăхĕсенче государствăна брынза памалли обязательствăсене пĕтĕмĕшпех пурнăҫламалла.

Хатĕрлев организацийĕсен тата ҫакна асра тытмалла: выльăх-чĕрлĕх продукчĕсене хатĕрлес ĕҫ вăл—хальхи вăхăтра, ҫуллахи уйăхсенче тумалли ĕҫ. Халĕ ку ĕҫсене сÿрĕк туса пыни каллех иртнĕ ҫулсенчи йăнăшсем патне илсе пыма пултарать. Иртнĕ ҫулсенче пирĕн чылай колхозсем, колхозсемпе единоличниксен хуҫалăхĕсем сĕт-ҫу, ҫăмарта, аш-какай памалли обязательствăсене кая юлса тултарчĕҫ е парăмра тăрса юлчĕҫ. Кăҫал пирĕн государствăна сĕт-ҫу, ҫăмарта, аш-какай, брынза памалли обязательствăсене тултарман е кая юлса тултаракан хуҫалăхсем вуҫех пулма тивĕçлĕ мар. Вырăнти партипе совет тата комсомол организацийĕсен ку ĕҫре хатĕрлев работникĕсене куллен пулăшса, ертсе пырас пулать.

Сталин юлташ кăҫалхи майăн 1-мĕшĕнчи приказĕнче Ленин хушса хăварнине асă илтерсе ҫапла каларĕ: «Вăрçă пурнĕрех пуҫланчĕ пулсан, йăлтах вăрçă валли, чирек мĕнле сÿрĕк ĕҫленине тата сÿя курса ĕҫлемешшине вăрçă вăхăтĕнчи закон тăрăх айăпламалла», терĕ. Ҫак сăмахсенчен хатĕрлев работникĕсен халех тивĕçлĕ вывод тăвас пулать. Выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем хатĕрлес ĕçри чăрмавсене сирсе ку ĕҫе халех вăйлатмалла.

Заем ҫырăнса илсе совет гражданинĕ тăван ҫĕршыв умĕнчи тивĕҫлĕхе пурнăҫа кĕртет

Заем сарас ĕҫе вăйсăрлатмалла мар

Государствăн Иккĕмĕш Военнăй Заемне сарас ĕç республикăра кăҫал нихăҫанхи пек мар пысăк ҫĕкленÿпе пулса пырать. Июнĕн 9-мĕшĕ тĕлне ҫĕнĕ заема 128.858.000 тенкĕлĕх сарнă, укҫине 82.453.000 тенкĕ хывнă. Малта пыракансен шутне Калинино, Красноармейски, Сĕнтĕрвăрри тата ытти районсем те кĕреҫҫĕ.

Анчах чылай районсем заем ĕçне юлашки кунсенче сÿрĕклетни, ÿсĕмсемпе лăпланса ларма тытăнни палăрать. Етĕрне, Йĕпреҫ, Сĕмĕрле, Хĕрлĕ Чутай, Шăмăршă районĕсем заем укҫине пухас ĕҫе организацилессине кая хăвараҫҫĕ. Заем укҫине халех пани государствăна пысăк усă кÿни ҫинчен колхозниксене ăнлантарса памаҫҫĕ. Заем укҫине срокчен тÿлесе татассишĕн пур районсен те тăрăшмалла. Ку ĕҫе сÿрĕклетмелле мар.

Пурте ҫырăнчĕҫ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, июнĕн 8-мĕшĕ. (Телефонпа). Иккĕмĕш Военнăй Заема районра июнĕн 8-мĕшĕ тĕлне 3 миллион та 795 пин тенкĕлĕх сарнă, укҫине 3 миллион та 371 пин тенкĕ хывнă. Пĕлтĕрхипе танлаштарсан 1 354 пин тенкĕ ытла сарнă.

Уйрăмăнах Янчеллă, Карай ялсовечĕсем хăйсен организованноҫне кăтартрĕҫ. Янчеллă ялсовечĕ 276 пин тенкĕлĕх сарса, укҫине те пĕтĕмпех хывнă. Карай ялсовечĕ 222 пин тенкĕлĕх сарнă, укҫине ҫийĕнчех пухса панă.

Ҫĕнĕ заема ҫырăнас ĕҫ тракторист сем хушшинче те пысăк активлăхпа пулса иртрĕ. П. Владимировпа В. Герасимов юлташсем 50-шар пин тенкĕлĕх ҫырăнса, укҫине ҫийĕнчех пачĕҫ. «Победа» колхоз членĕ Н. Филиппова юлташ 25 пин тенкĕлĕх ҫырăнса, укҫине пĕтĕмпех парса татрĕ. Ҫакнашкал примерсем районра татах та нумай.

И. ХАТАЕВСКИЙ.

Малтанхи кунах вĕҫленнĕ

СĔМĔРЛЕ, Июнĕн 7-мĕшĕ. (**Хамăр корр. телефонпа**). Государствăн Иккĕмĕш Военнăй заемне сарас ĕҫе комбинат коллективĕ малтанхи кунах вĕҫлерĕ. Кунти рабочисемпе служащисем ҫĕнĕ заема пĕр миллион тенкĕлĕх ытла ҫырăнчĕҫ. Ҫак ĕҫре вĕсем хăйсен патриотизмне лайăх палăртрĕҫ. Кашни цехра ĕҫлекен рабочипе работница уйăхри ĕҫукҫин 200—300 процентчĕ чухлĕ ҫырăнчĕҫ. Акă, комбинатри стахановецсем: Корнеев юлташ 3 пин тенкĕлĕх, Строганов юлташ 1.400 тенкĕлĕх, Яксон юлташ 1.500 тенкĕлĕх ҫырăнчĕҫ, ҫакă вăл уйăхри ĕҫ укҫин 250 процентчĕ чухлĕ пулать. 63 ҫулхи рабочи Ефимов юлташ 1,200 тенкĕлĕх ҫырăнса, укҫине 350 тенкĕ ҫийĕнчех пачĕ.

Анисимов юлташ бригадинче ĕҫлекен стахановецсем: Языков юлташ уйăхри ĕҫукҫин 500 процентчĕ чухлĕ, Щетининпа Яковлев юлташсем виҫĕ уйăхри ĕҫ укҫи чухлĕ ҫырăнчĕҫ.

МУСКАВ, КРЕМЛЬ

СТАЛИН юлташа

Хаклă Иосиф Виссарионович!

Ĕлĕк эпир правасăр, хурлăх курса, вырăнтан вырăна куҫса ҫÿресе пурăннă. Совет влаҫĕ, большевиксен партийĕ тата Эсир Казахстанри халăхсемшĕн тăрăшнипе пула эпир культурăллă та пуян пурăнакан пултăмăр.

Ылханлă нимĕç бандичĕсем пирĕн ҫĕршыва кĕрсе кайрĕҫ, вĕсем пирĕн тăван ҫĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне пĕтерсе лартасшăн, пире чурасем туса хурса ĕлĕкхи йывăр пурнăҫпа пурăнтарасшăн, анчах ҫакă вăл нихăҫан та пулас ҫук.

Манăн, калпин совет ҫынниен пекех, пĕр шухăш-тĕллев пур, вăл — нимĕҫсен фашистла бандичĕсене часрах аркатса тăкса, таса совет ҫĕрне гитлерла ирсĕрсенчен тасатасси. Ҫак шухăша пурнăҫа кĕртес тесе, пирĕн пĕтĕм ҫĕршыва каллех ирĕклĕ те телейлĕ пурнăҫпа пурăнтарас тесе эпĕ нимĕне те шеллесе тăмастăп.

Хаяр тăшмана хирĕҫ пулса иртес татăклă ҫапăҫусенче хамăрăн паттăр Хĕрлĕ Ҫара пĕтĕм вăйпа пулăшас тесе, эпĕ Государствăн Иккĕмĕш Военнăй Заемне 1.036.000 тенкĕлĕх ҫырăнатăп, укҫине те халех тÿлетĕп. Илнĕ облигацисене пурне те оборона фондне хыватăп.

Манăн укҫапа тунă хăрушă боевой машинăсем фашистсен пуҫĕсем ҫине вăйлă вут-ҫулăм тăкчăр, вĕсем ҫине снаряд ҫумăрĕ ҫутарччăр, ҫапла майпа нимĕҫ вăрă-хурахĕсене татăклăн аркатса тăкассине сывхартчăр.

Сире, Сталин юлташ, нумай ҫул хушши пурăнма тата ҫирĕп сывлăхлă пулма пĕтĕм чĕререн сунатăп.

БЕРДЫБЕКОВ КАЛПЕ.
Кăнтăр Казахстан облаҫĕнчи Пахтааральски районри Карл Маркс ячĕпе тăракан колхоз председателĕ.

Кăнтăр Казахстан облаҫĕ, Пахтааральски район, Карл Маркс ячĕпе тăракан колхоз
Колхоз председательне Бердыбеков юлташа

Совет Союзĕн оборонишĕн тăрăшнăшăн Сире, Бердыбеков юлташ, саламлатăп тата Хĕрлĕ Ҫар ячĕпе тав тăватăп.

И. СТАЛИН.

Бердыбеков колхозникĕн ырă ĕҫĕ

АЛМА-АТА, июнĕн 7-мĕшĕ (ТАСС). Казахстанра Государствăн Иккĕмĕш Военнăй Заемне ҫырăнни казах халăхĕ хăйĕн совет ҫĕршывне пĕтĕм чĕререн юратнине, вăл нимĕҫсен фашистла захватчикĕсене кирек мĕн пулсан та ҫĕнтерме тăрăшнине питĕ уççăн кăтартса парать.

Казахстанăн ЦК ВКП(б) секретарĕ Шаяхметов юлташ ТАСС корреспондентне ҫапла каласа панă:

— Кăнтăр Казахстан облаҫĕнчи Пахтааральски районри Карл Маркс ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Калпе Бердыбеков нимĕҫ захватчикĕсене хирĕҫ пулас татăклă ҫапăҫусем умĕн хамăр Тăван ҫĕршыва патриотла ырă кăмăлпа пулăшассин примерне кăтартрĕ. Совет влаҫĕ, колхоз йĕрки ăна, ĕлĕк правасăр, хăраса, хут пĕлмесĕр пурăннă чухăн, хресчене пуян та культурăллă пурăнма ҫул уҫса пачĕ. Унăн пĕтĕм семьи колхозра 13 ҫул ĕҫлет, вăл колхозра ырă кăмăлпа ĕҫлени ҫĕр хут ытла тупăш парнине ĕҫре курнă. Бердыбеков юлташăн семьи 1942 ҫулта кăна пин ҫурра яхăн ĕҫкунĕ ĕҫлесе тунă. Бердыбековăн виҫĕ ывăлĕ ывăлĕ нимĕҫ захватчикĕсене хирĕҫ ҫапăҫаҫҫĕ. Бердыбеков вĕсене хăйĕн пĕтĕм семьипе пĕрле хăйĕн пурнăҫне шеллемесĕр ĕҫлесе пулăшса тăрать. Иккĕмĕш Заем кăларни ҫинчен илтсенех Бердыбеков, хăйĕн семьипе пере келлесе хăварнă пĕтĕм укҫине пухса, ҫĕнĕ заема 1.036 пин тенкĕлĕх ҫырăннă. Ҫав укҫана вăл пĕтĕмпе тенĕ пекех ҫийĕнчех тÿленĕ.

Ҫак ырă ĕҫ ҫинчен часах пĕтĕм республика пĕлнĕ. Кăнтăр Казахстанри 17 колхозник—«Ортатюбе» колхоз чабанĕ Джуньбаев юлташ, Калинин ячĕпе тăракан ялхуҫалăх артелĕн колхозници Разметова юлташ, Джамбул ячĕпе тăракан ялхуҫалăх артелĕн колхозникĕ Байметов юлташ тата ыттисем те — ҫĕнĕ заема пĕр миллион тенкĕлĕх ҫырăнса, укҫине пĕтĕмпе тенĕ пекех панă. Кзыл-Орда облаҫĕнчи «Казрис» ялхуҫалăх артелĕн колхозникĕ Коянов юлташ ҫĕнĕ заема 230 пин тенкĕлĕх ҫырăннă, укҫине те ҫавăнтах панă, «Кзыл-Аскер» колхоз председателĕ Бексебаев юлташ 125 пин тенкĕлĕх ҫырăннă т. ыт. те.

Ҫĕнĕ зама ҫырăнас ĕҫре Казахстанри животноводсем, хăйсен вăйне шеллемесĕр ĕҫлесе Оборонăн Государственный Комитечĕн куҫса ҫÿрекен Хĕрлĕ ялавне илнĕскерсем, малти ретре пыраҫҫĕ. Кзыл-Орда облаҫĕнчи Терень Узякски районри Майăн 1-мĕшĕ ячĕпе тăракан колхозăн ферма заведующийĕ Мамай Кудамбаев ҫĕнĕ заема 100 пин тенкĕлĕх ҫырăннă, укҫине те ҫийĕнчех тÿленĕ. Ун хыççăн ҫĕршер колхозник-животноводсем те ҫавăн пекех тунă. Республикăра колхозник-животноводсем хăйсен чыслăн тата тăрăшса ĕҫлесе тупнă укҫисене государствăна кивçен паман пĕр ферма та, кĕтÿ ÿҫтĕрмелли пĕр вырăн та ҫук.

Рабочисемпе колхозниксен тата интеллигенцин халиччен пулман пек патриотизмлă вăйлă ҫĕкленĕвĕ — акă мĕне пула ĕнтĕ ҫĕнĕ заема пĕр талăк хушшинчех республикăра сарма шутланă суммăран 106 миллион тенкĕлĕх ытла ҫырăннă. 150 миллион та 267 пин тенкине ҫийĕнчех панă. Заем ҫырăнас ĕҫ пур ҫĕрте те малалла пырать. Государствăн Иккĕмĕш Военнăй Заемне хăвăрт та йĕркеллĕн сарса, казах халăхĕ пирĕн совет ҫĕршывне хÿтĕлес аслă ĕҫе, нимĕҫ захватчикĕсене аркатса тăкас ĕҫе, пирĕн пулас ҫĕнтерÿ ĕҫне ҫĕнĕ вăй хывать.

Укҫине ҫийĕнчех тÿлеҫҫĕ

ШĂХАСАН. Уйкас Кипек ялсоветне кĕрекен Куйбышев тата Тельман ячĕсемпе тăракан колхозсен членĕсем Иккĕмĕш Военнăй Заема нихăҫанхинчен пысăк активлăхпа ҫырăнчĕҫ. Куйбышев ячĕпе тăракан колхозра кĕске вăхăт хушшинчех 59.940 тенкĕлĕх ҫырăнса, укҫине те ҫийĕнчех хыврĕҫ. Тельман ячĕпе тăракан колхозра 84.050 тенкĕлĕх ҫырăннă, укҫине те хывнă. Ку тĕлĕшпе заем уполномоченнăйĕсем С. Христофоров, И. Волкова юлташсем уйрăмăнах аван ĕҫлерĕҫ. С. Христофоров хăй 3 пин тенкĕлĕх ҫырăнса, укҫине те ҫийĕнчех хыврĕ.

Отечественнăй вăрçă инвалидĕсем П. Яковлев, Н. Кошкин, В. Архипов, Аркадий Петров юлташсем 1000 тенкĕлĕх ҫырăнса, укҫине пĕтĕмпех парса татрĕҫ. Куйбышев ячĕпе тăракан колхозри 70 ҫулхи старяксем Е. Ильин, Г. Васильев юлташсем 600-шер тенкĕлĕх ҫырăнчĕҫ, укҫине те ҫавăнтах пачĕҫ. Тельман ячĕпе тăракан колхозри тата старик Афанасьев юлташ 1.700 тенкĕлĕх ҫырăнчĕ, укҫине ҫав кунах парса татрĕ.

Ялсовет ҫумĕнчи агитколлектив ҫĕнĕ заема ăнăҫлăн вырнаҫтарас тĕлĕшпе ăнлантарулă ĕҫе аван организацилерĕ. Агитаторсем С. Вяшняков, Т. Тимофеев, И. Иванов, Ф. Тихонов юлташсем хăйсен участокĕсенче агитацилле-ăнлантарулă ĕҫе тăтăшах туса пыраҫҫĕ.

С. Х.

* * *

КАЛИНИНО, июнĕн 8-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри предприятисемпе колхозсенче Государствăн Иккĕмĕш Военнăй Заемне сарас ĕҫ ăнăҫлăн пырать. Июнĕн 8-мĕшĕ тĕлне 5 миллион та 95 пин тенкĕлĕх ҫырăнса, укҫине пĕтĕмпех хывнă.

Ермошкка ялсоветне кĕрекен колхозсем ҫĕнĕ заема 475 пин тенкĕлĕх ҫырăннă, укҫине те парса татнă. Калинин ячĕпе тăракан колхоз членĕ, ватă старик Кузьма Афанасьев (унăн тăватă ывăлĕ фронтра) 2 пин тенкĕлĕх ҫырăнса, укҫине те ҫийĕнчех хыврĕ. Ҫĕнĕ заема 5—6 ачаллă фронтовик арăмĕсем те активлăн ҫырăнаҫҫĕ. Акă, А. Короткова юлташăн семьере 2 ача тата ĕҫлеме пултараймак амăшĕ; вăл 1.000 тенкĕлĕх ҫырăнчĕ. Укҫине те йăлтах пачĕ.

Гитлеризма тĕп тумалли заем

Шупашкарти пожарнăй охрана командинче ĕҫлекенсем хушшинче ҫĕнĕ заема сарас ĕҫ патриотла ҫĕкленÿпе пулса иртрĕ. Вĕсем ҫак ĕçе, пĕр ҫын пек пулса, кĕске вăхăт хушшинчех вĕҫлерĕҫ.

Пожарниксем Якимов, Брагин, Кап юлташсем уйăхри ĕҫукҫин 200 процентчĕ чухлĕ ҫырăнчĕҫ. Якимов юлташ ҫĕнĕ заема сарас ялпа пухăннă митингра ҫапла каларĕ:

— Иккĕмĕш Военнăй заем гитлеризма тĕп тумалли заем, эпир паракан укҫа-тенкĕ гитлеризмăн пĕтес кунне сывхартнă ҫĕре каять. Эпĕ заемăн укҫине ыранах тÿлеме пулатăп,—терĕ.

Пожарнăй охрана командин коллективĕ ҫĕнĕ заемăн укҫине те сак кунсенчех парса татма пулчĕ. Хăшпĕрисем ҫийĕнчех парса татрĕҫ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Июнĕн 7-мĕшĕнчи каҫхи пĕлтерÿ

Июнĕн 7-мĕшĕнче фронтра паллă улшăнусемех пулман.

Пирĕн авиаци Рига залливĕнче нимĕҫ транспортне путарнă, Хура тинĕсре тăшманăн войскăсемпе боеприпассем турттарса пыракан 3 баржипе 5 катерне путарнă.

* * *

Июнĕн 6-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаҫĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕҫсен войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 60 автомашинине кая мар пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, боеприпассен 5 складне сирпĕнтерсе янă, тăшман пехотине 2 ротăна ҫити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Хĕвелтухăҫ фронтĕнче пирĕн чаҫсем нимĕҫ салтакĕсемпе офицерĕсене 300 ҫынна ҫити пĕтерсе тăкнă, артиллерин 2 батарейине тата миномётсен пĕр батарейине пусарса лартнă, тăшманăн 3 дзочĕпе 5 блиндажне ҫĕмĕрсе тăкнă. Пĕр участокра нимĕҫсен отрячĕ пирĕн позицисене разведка туса пĕлме хăтланнă. Совет боецĕсем тăшман разведчикĕсене пăшалсемпе тата пулеметсемпе пеме тытăннă та темиҫе вунă гитлеровеца пĕтерсе тăкнă.

* * *

Балаклея районĕнче тăшман пехотин пĕр роти танксем пулăшса пирĕн боевой охранене атакăланă. Кĕске тытăҫу хыççăн нимĕҫсене хăйсен малтанхи рубежĕсем патне хăваласа янă. Ҫапăҫу хирĕнче тăшманăн 100 вилли юлнă. Пирĕн летчиксем совет территорийĕ ҫине тăшман бомбардировщикне антарса лартнă. Нимĕҫ летчикĕсене тыткăна илнĕ.

* * *

Дон ҫинчи Ростовран хĕвеланăҫнерехре хăшпĕр вырăнсенче нимĕҫсем пирĕн оборонăна ҫапăҫса разведка тума хăтланнă, анчах та вĕсене пур ҫĕрте те пысăк ҫухатусем кÿрсе каялла ыйтса янă. Пĕр участока кăна илсен те, тăшманăн разведка тăвакан ушкăнĕнчи салтаксемпе офицерсене 70 ҫынна вĕлерсе тăкнă.

Пирĕн пĕр артиллери чаҫĕ нимĕҫсен пĕр артиллери батарейине, минометсен 2 батарейине тата грузсем турттарса пыракан 15 лава пĕтерсе тăкнă, тăшманăн 3 блиндажне ишĕлтерсе антарнă.

* * *

Ҫурçĕр-хĕвеланăҫ фронтĕнче пĕр чаҫри снайперсем май уйăхĕнче тăшманăн 150 салтакĕпе офицерне вĕлернĕ. Снайпер Медведев юлташ 23 нимĕҫе вĕлернĕ, снайпер Бурлацкий юлташ 20 нимĕҫе, снайпер Пермяков юлташ 15 нимĕҫе, снайпер орденоносец Василий Егоров май уйăхĕнче 20 гитлеровеца вĕлернĕ.

* * *

Калинин облаҫĕн районĕсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ юлашки кунсенче 2 нимĕҫ гарнизонне аркатса тăкнă, 100 гитлеровеца ытла вĕлернĕ. Партизансем нимĕҫсен «Юнкерс-88» йышши самолетне ушкăнпа пĕр харăс персе ÿкернĕ. Сав отрядри подрывникĕсем нимĕҫсен 2 ҫар эшелонне ÿпĕнтерсе янă. Калинин облаҫĕнчи партизансен тепĕр отрячĕ тăшман войскисене турттарса пыракан поезда ÿпĕнтерсе янă. Ҫĕмĕрĕлнĕ вагонсем айĕнче нимĕҫ салтакĕсемпе офицерĕсем нумай пĕтнĕ.

* * *

Нимĕҫсен 10-мĕш мотострелковăй полкĕнчен Хĕрлĕ Ҫар енне каҫнă поляк салтакĕ Сигизмунд Н. ҫапла каласа панă: «Пирĕн полкра нимĕҫсем сахал, 40 процентран та ытла мар. Пуринчен ытла — полякcемпе словаксем т. ыт. те. Эпир нимĕҫсене курайманччĕ. Манăн тăван ҫĕршывра гитлеровецсем мĕн туса хунине эпĕ пĕр минутăлăха та пулин манса кайма пултаратăп-и вара. Нимĕҫ бандичĕсем ман семьене тăван ялтан хăваласа кăларса янине, ăна пĕр хуҫалăхсăр, ҫĕрсĕр, выльăх-чĕрлĕхсĕр, пĕр пурлăхсăр тăратса хăварнине манса кайма пултаратăп-и вара эпĕ. Пирĕн хуҫалăха Гринке ятлă нимĕҫ тытса илнĕ те ман семьене ялтан хăваласа кăларнă, хăйсене нимĕн илме те паман. Нимĕҫ ҫарĕнче тăма, нимĕҫ формине тăхăнса ҫÿреме маншăн намăс, тесе шутлаттăм эпĕ. Тÿрĕ килсенех эпĕ хампа пĕрле постра тăракан нимĕҫе, обер-ефрейтора, вĕлертĕм те, ручной пулемет йăтса, вырăссем енне чупса каҫрăм».

* * *

Нимĕҫсен фашистла ирсĕрĕсем Витебск облаҫĕнчи Баканиха, Канашенка, Старина тата Поречье ялĕсенчи мирлĕ халăха тискеррĕн асаплантарнă. Пĕр Баканиха ялне кăна илсен те, унта гитлерла вăрă-хурахсем 112 старике, хĕрарăма тата пĕчĕк ачасене персе пăрахнă е вутра ҫунтарса янă. Вăрмана тарса пытанма ĕлкĕрнисем кăна пĕтесрен ҫăлăнса юлнă.

Июнĕн 8-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Июнĕн 8-мĕшĕ ыран тенĕ чух ҫĕрле фронтра нимĕнле паллă улшăнусем те пулман.

* * *

Хĕвеланăҫ фронтĕнче старши лейтенант Денисов ертсе пыракан разведчиксен групли ҫĕрле тăшман тăракан вырăна кĕрсе кайнă та пĕр ушкăн гитлеровеца вĕлерсе пĕтернĕ. Нимĕҫсем пирĕн разведчиксене ҫавăрса илме хăтланнă. Жмуров юлташ командир пулса тăракан подразделенири артиллеристсем персе нимĕҫ пехотине пĕр рота таран сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă. Артиллери хÿтĕлесе тăнипе пирĕн разведчиксем хăйсен чаҫне ăнăҫлăнах таврăннă.

* * *

Севск районĕнче пирĕн артиллеристсем тăшман войскисен колонни ҫине пенĕ, нимĕҫ пехотине икĕ рота таран пĕтерсе тăкнă, 3 танка персе ҫĕмĕрнĕ тата боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă.

* * *

Белгород районĕнче нимĕҫсем пирĕн пĕр чаҫăн боевой хуралне атакăланă. Штык вĕççĕн хаяррăн ҫапăҫса, пирĕн боецсем 60 гитлеровеца вĕлернĕ, тăшмана каялла хăваласа янă. Сывлăшри ҫапăҫура пирĕн летчиксем 6 нимĕҫ самолетне персе ÿкернĕ. Ҫав самолетсенчен иккĕшне Совет Союзĕн Геройĕ—гвардин кĕçĕн лейтенанчĕ Новиков юлташ пĕтерсе тăкнă.

* * *

Балаклея районĕнчи пирĕн подразделенисем Ҫурçĕр Донецăн сулахай енне каçма темиçе хут та хăтланнă тăшмана персе янă. Пăшалсемпе [illegible]

(Вĕҫĕ 2-мĕш страницăра).

Совет Информаци Бюровĕнчен

Июнĕн 8-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерĕвĕн вĕçĕ

метсенчен пеншпе тата шыва путса, 10 гитлеровеца çити пĕтнĕ. Тепĕр участокра пирĕн артиллери пултăра калибрлă 2 пулемета пĕтерсе тăкнă. Пĕр блиндажа ишĕлтернĕ тата тĕрлĕ çар грузĕсем тиенĕ 10 лава çĕмĕрнĕ.

* * *

Сурçĕр-Хĕвеланăç фронтĕнче тăшман тинĕн Пахоменко юлташ ертсе пыракан подразделени хӳтĕленĕ участока атакăланă. Нимĕçсене пăшалсемпе тата пулеметсемпе персен, вĕсем каялла чакнă, çапăçу хирĕнче тĕсен вилнĕ салтакĕсемпе офицерĕсем нумай выртса юлнă. Пулеметчиксем çав çапăçура 30 нимĕçе ытла вĕлернĕ.

* * *

Волхов фронтĕнче пирĕн артиллеристсем 10 дзота, 8 блиндажа ишĕлтерсе антарнă, артиллерин 7 батарейине тата миномётсен 3 батарейине пусарнă. Пĕр чăсăн боецĕсем нимĕçсене траншейăсем патне янă та, сывăхранах персе, тăшман отрядне пĕтĕмпех пĕтерсе тăкнă.

* * *

Смоленск облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ тăшманăн 4 çар эшелонне ӳпĕнтерсе янă, 4 паровоз тата 45 вагонпа пистерна çĕмĕрĕлнĕ. Шоссе çулĕсем çинче партизансем тăшманăн салтакĕсемпе хĕçпăшалсем турттарса пыракан 11 автомашинăне сирпĕнтерсе янă. Кунсăр пуçне, партизансем нимĕç гарнизонне аркатса тăкнă тата бензин складне вут тивертнĕ.

* * *

Нимĕçсен 1-мĕш бомбардировочнăй эскадрин 2-мĕш группинчи 4-мĕш отрядĕнчи «Юнкерс—88» йышши самолетăн тыткăна лекнĕ радист-стрелокĕ—унтер-офицер Рихард Хегельман çапла калаcа панă: «1943 çулхи апрельччен эпĕ Францире пурăнтăм Россия-на килни нумай пулмасть. Эпĕ икĕ хут çеç вĕçсе тухма ĕлкĕртĕм. Курска тапăннă чухне 4-мĕш отрядри мĕнпур самолетсем тĕтрĕç. Эпĕ Франци çинче вĕçсе çӳренĕ, сывлăшри çапăçусенче сахал пулман, анчах та Курск патĕнче пулнă çапăçусем пек çапăçусене халиччен курманччĕ. Хула патне пырас умĕн пире вырăс истребителĕсем тĕл пулчĕç те атакăласа, пирĕн мĕнпур самолетсене пере-пере ӳкерчĕç. Иккĕмĕш группăри ытти отрядсем те пысăк сухатусем тӳсрĕç.

Пирĕн аэродрома тапăннă чухне вырăс летчикĕсем питĕ хăюллăн çапăçрĕç. Сăмахран, майăн 6-мĕшĕнче вĕсем, зенитнăй артиллери вăйлăн пенине пăхмасăрах, хăйсен мĕнпур бомбисене пăрахрĕç, пирĕн çĕр çинчи 11 самолета пĕтерсе тăкрĕç. Çавăн чухне вырăссен 2 самолечĕ пĕтрĕ. Анчах Германин информаци бюровĕ—вырăссем 51 самолет çухатрĕç, тесе пĕлтерчĕ. Çакăнта ĕнтĕ эпир нимĕç пĕлтерĕвĕсем шамăса пĕлмесĕр суйнине тепĕр хут куртăмăр».

* * *

Нимĕç сыхçиенĕсем Калинин облаçĕнчи Забелье, Рубаны, Кузьмино тата Черново ялĕсене ним хăвармиччен аркатса тăкнă. Фашистла сынвĕлерен-сем çав ялсенчи пĕр айăпсăр сынсене 100 сынна ытла, çав шутра хĕрарăмсемпе ачасене те, персе вĕлернĕ е чĕрĕллех çунтарса янă. Нимĕçсем колхозниксен пурăнмалли пур çурчĕсене те, икĕ шкула тата обществăллă ытти çуртсене çунтарса янă.

Пирен авиаци Унеча чугунçул узелне тапăнни

Июнĕн 7-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн инçене вĕçекен авиаци йышшăн вĕçсе кайса Унеча чугунçул узелне (Орел облаçĕ) тапăннă. Боеприпассен, хĕçпăшал, горючи склачĕсем çине тата тăшманăн пĕр çĕре пухăннă чугунçул эшелонĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем пăрахнине пула пушарсем нумай тухнă тата вăйлă взрывсем пулнă.

Пирĕн самолетсем, пĕринчĕр пуçне, пурте хăйсен базисене таврăннă.

Нимĕç самолечĕсем Горький хулине тапăнни

Июнĕн 6-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле тата июнĕн 7-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле тăшман авиацин 100 çити самолечĕсем Горький хулине тапăнма хăтланнă. Тăшман самолечĕсен пысăк пайне пирĕн çĕрлехи истребительсемпе зенитнăй артиллери хула патне çитиччех сапаласа янă. Тăшманăн хула çине кĕрсе кайнă темиçе самолечĕ халăх пурăнакан кварталсем çине пимĕн тĕлли-паллисĕр бомбăсем пăрахнă. Пăртак сиен пунă. Гражданла халăх хушшинче вилнисемпе аманнисем пур. Тапăнăва сирсе янă чух 12 нимĕç бомбардировщикне персе ӳкернĕ. Пирĕн авиацин çухатусем пулман.

Почтальон начар ĕçлет

АВАЙ. Г. Краснов Тĕмер тата Мурăр ялĕсенчи сынсен ячĕпе килекен е калкан çырусене Тăвайран е Тăвая турттарать. Анчах вăл хăйне шанса панă ĕçе юрăхсăр ĕçлемест, çырусене е ытти почтăпа сӳретмелли япаласене вăхăтра турттарса килмест. Кунсăр пуçне, Г. Краснов Тĕмер колхозĕнче почтальон пулса ĕçлет. Ку ĕçе те вăл юрăхсăр тумасть. Çырусене пĕр сăлтавсăр хăй патĕнче темиçе кун выртарать. Красновăн хăйне панă ĕç çине пек чунсăрла пăхни колхозниксене тарăхтарать. Çавăн пирки эпир çырăву уйрăмĕн конторин хăтланĕсĕ сăмахне калаcса шанатпăр.

Г. ФИЛИППОВ.

Республика уйхирĕсенче

Пурте çум çумлама тухаççĕ

ÇĔМĔРЛЕ, июнĕн 8-мĕшĕ. (Хамăр корр.). Ленин ячĕпе тăракан колхозра пур бригадăсенче те тырăсене çум-курăксенчен тасатас ĕç анлăн пулса пырать. Паянхи куна 100 гектар çинчи кĕрхи тырăсене, 50 гектар çинчи клевера çумкурăксенчен тасатнă. Кунта çак ĕçе кулленех ватă колхозниксем тата 10—13 çулхи ачасем активлăн хутшăнаççĕ.

Юлашки вăхăтра Мыслец тата Уялхал ялсовечĕсенчи колхозсенче те çум çумлас ĕç анлăн пулса пырать. Тĕслĕхрен, «Ударник» колхоз 12 гектар клевера, 8 гектар сĕлле çумкурăксенчен тасатнă. Ахматкхăри «Майăн 1-мĕшĕ» колхоз 10 гектар сĕлле, 4 гектар вире, Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз 8 гектар вире çумкурăксенчен тасатнă.

Утă çулма хатĕрленеççĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, июнĕн 8-мĕшĕ. (Телефонпа). Алмавчăри «12 лет Октября» колхоз утă çулма тухма хатĕрленет. Кашни бригадăрах тырă вырма пĕрер жнейка тата косилкăсем пур. Вĕсене пурне те тĕплĕн юсаса лартнă. Утă çулма çавасем туптаса хатĕрлене, лапаткасем кирлĕ таранах илсе хунă, креплесем тунă.

Халĕ колхозра тислĕк калапса çертме тăвас ĕçсемпе пĕрлех, колхозниксем итемсене тасатаççĕ, амбар-кĕлетсене çуса дезинфекцилеççĕ, юсаççĕ.

Р. ВАСИЛЬЕВА.

Стахановкăсене ĕçшĕн хушса тӳлерĕç

ШАХАСАН. Сталин юлташăн приказĕпе хавхаланса, пирĕн МТС-ри хĕрарăм-трактористкăсем кăçалхи çуракинче нихăçан пулман хастарлăхпа ĕçлерĕç, 26 хĕрарăм-трактористкăран 20-шĕ хăйсен сменисенчи нормăсене ирттерсе тултарчĕç. 11-мĕш номерлĕ трактор бригадинчи комсомолка-трактористка Анисия Яшманова У-2 маркăллă тракторпа çуракинче 28 гектар сухалас вырăнне 67,88 гектар сухаларĕ, ĕç планне 240 процент пурнăçларĕ, 62 килограмм горючи перекетлесе хăварчĕ. Комсомолка Нина Иванова СТЗ маркăллă тракторпа 40 гектар сухалас вырăнне 59,20 гектар сухаларĕ, 134 килограмм горючи перекетлерĕ.

Çавăн пекех ытти хĕрарăм-трактористкăсем те нормăсене ирттерсе тултарчĕç. 10-мĕш номерлĕ бригадăра Евдокия Иванова, СТЗ маркăллă тракторпа 86,33 гектар сухаласа, нормăна 216 процент тултарчĕ, 88 килограмм горючи перекетлесе хăварчĕ. Çуракинче лайăх пахалăхла тата хăвăрт ĕçленĕшĕн ăна 66,34 ĕçкунĕ хушса тӳлерĕç. Трактористка Матрена Аристархова СТЗ маркăллă тракторпа кăçал çуракинче 82,03 гектар сухаларĕ, плана 205 процент пурнăçларĕ, 75 килограмм горючи перекетлерĕ. Ĕçшĕн хушса тӳлемелли йĕрке тăрăх вăл 59 ĕçкунĕ илчĕ. Серафима Сидорова трактористка та çуракинче тракторпа тумалли ĕçсен планне 200 процент пурнăçларĕ, 75 килограмм горючи перекетленĕ, ăна 58 ĕçкунĕ хушса тӳлерĕç.

Зинаида Иванова юлташ кăçал тракторпа пĕрремĕш çул ĕçлет. Çамрăк трактористка ĕçре ытти трактористсенчен юлмасть, вăл çуракинчи хăйĕн ĕç планне 199 процент пурнăçларĕ, 263 килограмм горючи перекетлесе хăварчĕ. Ăна 60,58 ĕçкунĕ хушса тӳлерĕç. Çавăн пекех Серафима Ефремова юлташа та, çураки вăхăтĕнче 80 гектар сухаланăскере, 58 ĕçкунĕ хушса тӳлерĕç.

Ырми-канми ĕçлеççĕ тылри патриотсем. Вĕсем хăйсен чыслă ĕçĕсемпе фронта активлăн пулăшса тăраççĕ. Халĕ ирхи çĕрме тунă çĕрте те вĕсем кулленех ĕç нормине ирттерсе тултараççĕ.

О. ВИНОГРАДОВА,
Политотдел начальникĕн комсомол енĕпе ĕçлекен помощникĕ.

Подсобнăй хуçалăхсенче çураки ĕçĕсем кая юлаççĕ

СОВЕТСКОЕ, июнĕн 8-мĕшĕ. (Телефонпа). Райцентрти учреждениcен кашниннех пахча-çимĕç лартса тумалăх участоксем пур. Пĕтĕм учреждениcемпе артельсене пĕрле шута илсен, кăçал подсобнăй хуçалăхсен участокĕ 68 гектара çити пулать. Паянхи куна 60,7 гектар çинче çеç çураки ĕçĕсене туса хăварнă. Уйрăмăн илсен, 11 гектар тĕштырă, 8,95 гектар пăрçа йышши культурăсем, 32,29 гектар пĕр çул ӳсекен курăксем акнă тата 7,97 гектар çине çĕрулми лартнă.

Тĕслĕхрен, райпищекомбинат хăйне уйăрса панă участокра çуракине ăнăçлăн туса ирттерчĕ. Виçĕ гектар çĕрулми лартрĕ, виçĕ гектар пăрçа тата лашасем валли утă туса илме икĕ гектар пĕр çул хушши ӳсекен курăк акрĕ. Çавăн пекех ачасен сачĕ те пĕр гектар çĕрулми тата пахча-çимĕçсем лартрĕ.

Çакă вăл питĕ те кирлĕ ĕç. Учреждениcен участокĕсенче пахча-çимĕç, çĕрулми нумай туса илни служащисен пурнăç условине лайăхлатать. Анчах çакна пур учреждениcенче те ăнланса илменха. Акă районри столовăй илер. Кунта пахча-çимĕç лартассипе интересленмеççĕ, паянхи куна çитсе те хăйсене панă участокра çĕрулми лартса пĕтермен. Сельпо коллективĕ çак ĕçе халĕ те тытăнман. Сельпо председателĕ Синдер юлташ подсобнăй хуçалăхпа сахал интересленет.

Подсобнăй хуçалăхсенче çураки ĕçĕсене халех вĕçлемелле. Усă курман çĕр пĕр лаптăк та юлмалла мар.

В. Рыжова.

Остреxово колхозникĕсен пуçарăвне йышăнса илчĕç

ÇĔМĔРЛЕ, июнĕн 8-мĕшĕ. (Хамăр корр.). Иваново облаçĕнчи Родниковски районри Острецово ялĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем нимĕç захватчикĕсенчен сиен курнă колхозсене обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе сĕнĕрен йĕркелесе ямашкăн пулăшма пулаççĕ. Вĕсем нимĕç оккупанчĕсем пулнă Смоленск облаçĕнчи Сычевски районри „Вперед к социализму“ колхоза тăванла пулăшу парса тăма шефа илчĕç. „Вперед к социализму“ колхоза пама Сталин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем планран ирттерсе выльăх-чĕрлĕх ӳстереççĕ. Нимĕç захватчикĕсенчен инкек тӳснĕ колхоза вĕсем çĕнĕрĕн вăй-хăват иличченех тăванла пулăшу парса тăма пулаççĕ.

Çак паха пуçарăва Çĕмĕрле районĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем пысăк кăмăлпа ырласа йышăнаççĕ. Острецово колхозникĕсен паха пуçарăвне Егоркинăри „Большевик“ колхоз членĕсем пысăк активлăхпа сӳтсе-яврĕç. Нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă районсенчи пĕр колхоза шефа илсе вĕсем çав колхоза планран ирттерсе пĕр ĕне, икĕ сурăх ӳстерсе пама пулчĕç.

Çавăн пекех Хутарти Ленин ячĕпе тăракан колхоз та планран ирттерсе икĕ пăру, виçĕ сурăх парса пулăшма йышăнчĕ.

Х. ЛИСИН.

Фронтовиксен çемьисене пулăшасса—куллен тумалли ĕç

ХĔРЛЕ ЧУТАЙ. (Хамăр корр.). Районри организацисемпе колхозсем фронтовиксен çемьисене пулăшмалли вунăкунлăхра пысăк ĕçсем туса ирттерчĕç. Кĕске вăхăт хушшинчех 370 хуçалăха пулăшнă. Колхозсем фронтовиксен çемьисене пулăшмалли фонда 5,5 тонна çăнăх, çавăн чухлех çĕрулми, 0,5 тонна купăста тата ытти япаласем уйăрса панă. «Труженик» колхоз (председателĕ Меркулов) виçĕ ачаллă Ольга Илюшкинăна пĕр ĕне парса пулăшнă, « Память Ленина» колхоз членне Пелагея Никитинăна 2 сысна çури панă. Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз нумай ачаллă фронтовик арăмне — Татьяна Чебайкинăна 11 пăт çурă, Мария Макаровăна — 6 пăт тырă панă т. ыт. те.

Анчах юлашки вăхăтра чылай организацисем фронтовиксен çемьисене пулăшас тĕлĕшпе ĕçлеме пăрахрĕç. Акчикасси ялсовет исполкомĕн председателĕ Казаков пулăшу ыйтма пыракансене пурне те тенĕ пекех райисполкома ярать. «Пирĕн фонд çук, района кайăр,» тет вăл.

«Красный Тоганаш» колхоз председателĕ Кудиков фронтовиксен çемьисен ыйтăвĕсем çине бюрократла пăхать. Фронтовик арăмĕ Майорова (унăн пĕчĕк ачасем пур) колхоз правленине темиçе хут та пырса пулăшу ыйтнă, анчах ăна пулăшман.

Çак колхозрах эвакуаци йĕркипе куçса килнĕ çемьесем пур, вĕсен чылайĕшĕсен упăшкисем Хĕрлĕ Çар ретĕнче. Вĕсем колхоз правленинчен иккĕмĕш уйăх ĕнтĕ пахча-çимĕçсем лартма çĕр лаптăкĕ ыйтаççĕ. Кудиков паян кунччен «паратпăр» тесе пурăнать.

Фронтовиксен çемьисене пулăшас тĕлĕшпе райисполком çумĕнче организациленĕ отдел юлашки вăхăтра хăйĕн ĕçне сӳрĕклетни сисĕнет. Вăл çак юлашки уйăхра районĕпе миçе сынна ĕçе вырнаçтарнине те, миçе çемьене пулăшу панине те пĕлмест. Отделра ĕçлекенсем вырăнсене сахал тухса çӳреççĕ.

Х. Лисин.

Çулйĕрсене юсамалли уйăхра

Çулйĕр ĕçне активлăн хутшăнмалла

Çулйĕр уйăхлăхĕ республикăра организованно пулса пымасть. Елчĕк, Первомайски, Комсомольски районсемсĕр пуçне, ытти районсем çак ĕçе сынсем мобилизацилемелли плана пурнăçласа пымаççĕ. Уйрăмăнах Шăмăршă, Канаш, Хĕрлĕ Чутай, Иш лей районĕсем калама çук начар ĕçлеççĕ. Канаш районĕнче (ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Добродушев юлташ) сынсем кашни кунах çулйĕр ĕçне 10 процентран ытла тухмаççĕ. Хĕрлĕ Чутай, Ишлей районĕсенче те график пурнăçланса пымасть. Ку ĕç сӳрĕккĕн пыни ВКП(б) райкомĕсемпе райсовет исполкомĕсем оперативно ертсе пыманнинчен килет. Вĕсем çак тĕлĕшпе ялсовет исполкомĕсемпе колхоз председателĕсем çине шанса тăраççĕ. Çавна пула ĕнтĕ хăшпĕр колхозсенче, тĕслĕхрен, Максим Горький тата Чапаев ячĕсемпе тăракан колхозсенче колхозниксене çулйĕр ĕçне мобилизацилемен.

ВКП(б) райкомĕсемпе райсовет исполкомĕсен çулйĕр уйăхлăхне тивĕçлипе ирттерес ĕçе большевикла ертсе пымалла. Çакăн пек вăраххăн ĕçленине ниепле те чăтма çук.

Уйăхлăх пуçланни 8 кун иртрĕ пулин те çулйĕр ĕçне колхозниксемпе колхозницăсем массăллăн тухни пихăш районра та çук-ха.

Халĕ, юлнă вăхăтпа туллин усă курса, çулйĕр ĕçне хĕрсех тытăнмалла.

В. МИХАЙЛОВ.
Дорупрапленин старши инженерĕ.

Шкулсенчи пĕлӳ тĕрĕслевĕсем

СЕНТЕР РАЙОНĔНЧИ ШКУЛСЕНЧЕ

Районри шкулсенче пĕлӳ тĕрĕслевĕсем вĕçленсе пыраççĕ. Сĕнтерти вăтам шкулта тĕрĕслевсем çирĕп расписани тăрăх, организованно пулса иртеççĕ. Июнĕн 7-мĕшĕнче 10-мĕш класра вĕренекенсем хими предмечĕпе тĕрĕслӳ ре пулчĕç. Тĕрĕслӳре пулнă 12 вĕренекенрен 5-шĕ «отлично», 3-шĕ «хорошо», 4-шĕ «посредственно» паллăсем илчĕç.

Пуçламăш шкулсенче тĕрĕслевсем вĕçленчĕç. Халĕ ĕнтĕ вĕренӳ çулĕн хăшпĕр итогĕсене тума пулать. Иртнĕ çулхи сентябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне пирĕн районри пуçламăш шкулсенче 1,114 вĕренекен шутланнă. Вĕренӳ çулĕ вĕçленнĕ тĕле тĕрлĕ сăлтавсемпе 115 вĕренекен шкула çӳреме пăрахнă, 19 ача çĕнĕрен хутшăннă.

Çуркуннехи пĕлӳ тĕрĕслевне 1.017 вĕренекен хутшăнса 938 ача урăх класа куçнă е вĕренсе тухнă. Çав класрах иккĕмĕш çул вĕренме 56 ача юлнă, 21 ачана кĕркуннехи тĕрĕслеве хăварнă.

Кăçалхи вĕренӳ çулĕнче Ирçе, Шупуç тата Калмăккасси шкулĕсем малта пычĕç. Çак шкулсенче пĕр ача та çав класах тепĕр çула юлман, пурте аван вĕренсе тухнă.

Çав вăхăтрах Тепте шкулĕ вĕренӳ çулне начар вĕçлени курăнчĕ. Унта вĕренӳре ĕлкĕрсе пырайман ачасем чылай.

ВЕДИНА,
Райсутĕç пайĕн заведующийĕ.

Хĕллене вутă хатĕрлерĕç

КАЛИНИНО. Педучилищĕре вĕренекенсем пĕлтĕрхи вĕренӳ çулĕнче те хăйсен вăйĕпе хĕл касмалăх вутă хатĕрленĕччĕ. Кăçал та вĕсем çитес вĕренӳ çулĕ валли вутă хатĕрлесе çитерчĕç.

Вăрман ĕçĕнче вĕренекенсем хăйсен заданийĕсене ытлашшипех тултарса 1-мĕш «В» класра вĕренечен С. Волков па А. Николаев юлташсем 3 кун ĕçлемелли задание пĕр кунта пурнăçларĕç.

Г. АНДРЕЕВ.

ХУДОЖЕСТВĂЛЛĂ СМОТР ЛАЙĂХ ИРТРĔ

КАНАШ. Районри художествăллă смотр Вырăскас Пикшихре тата Янкăлчра пулса иртрĕ. Районри пуçламăш, тулли мар вăтам тата вăтам шкулсем ку смотра лайăх хатĕрленсе хăйсен пултарулăхне туллин кăтартма тăрăшрĕç.

Художествăллă смотра Янкăлч вăтам шкулĕнчи М. М. Михайлова учительница ертсе пыракан хĕрачасен хорĕ «Колхоз хĕрĕсен юрри» ятлă юрра кăмăла килмелле юрласа пачĕ. Хор коллективĕнченех Сергеевăпа Костылева «Сербиянка» ташша ăста ташларĕç. Юлашкинчен М. М. Михайлова гитарăпа такмаксем юрласа пачĕ. Вăтакас Татмăшри тулли мар вăтам шкулти ачасем Тĕрлĕ физкультура упражненийĕсем туса кăтартрĕç. Фрося Салминапа Таня Горбатова «Казачек» ташшăпа клубри халăха тĕлĕнтерчĕç. Фрося, Таня, Сира, Нюра вĕренекенсем «Светит месяц» тата «Пойдем, пойдем, Дуня», ятлă юрăллă ташша аван ташларĕç. Андреев Прокопий (Янкăлч ялсовечĕн секретарĕ) калакан чăваш кĕвви, Ю. Кирилловăпа А. Димитриева тата шкул директорĕ ташласа пани клубри халăхăн кăмăлне кайрĕ.

Художествăллă смотра Чакасри пуçламăш шкулта вĕренекенсем те аван хатĕрленнĕ. Вĕсен шавлă оркестрĕ такмаксем аван выляса пачĕ. Çавăн пекех Юптапари пуçламăш шкулта вĕренекенсем хорĕ те çĕнĕ юрăсене килĕшӳллĕ юрласа пачĕ.

Калас пулать, ку районра смотра 13 шкултан хутшăнмалла пулнă, анчах та ытти 9 шкулĕ, çителĕксĕр хатĕрленнĕ пирки, смотра хутшăнма пименнĕ.

Т. ТУРХАН.

Колхозри стена хаçачĕ

Стена хаçачĕн редакторĕ Е. Назарова патне уйри бĕрен кăштăрласки канăва килнĕ мучи пынă.

— Лисук,—тенĕ вăл, — паян тырă акма ытах та аван пулмалла, анчах бригадирсем те, председатель те çук, ĕçкĕре çӳреççĕ вĕсем, а эпир акара. Çавсем çинчен ыранхи номерте çырса кăларасчĕ.

Тепĕр кунне колхозри «Ударник» хаçатра мучин «Çынсем акара, вĕсем хăнара» ятлă статьи тухнă. Унта колхозниксем акара чух колхоз руководителĕсем ĕçе çӳренине питĕ çивĕччĕн критикăланă.

В. Филиппов Иртеменкассинчи (Вăрнар р.) «Победа» колхоз çумĕнчи «Ударник» ятлă стена хаçачĕн активлă корреспонденчĕ. Вăл ватă, хутла пĕлмест пулсан та, хаçат ĕçне активлăн хутшăнать. Вăл ăçта ĕçсем япăх пынине, ăçта лайăх пынине редколлегине пĕлтерсех тăрать.

Стена хаçатĕнче тухнă хăшпĕр статьясемпе заметкăсене çийĕнчех тĕрĕслесси йăлана кĕнĕ. Тĕрĕслеççĕ, кирлĕ мерăсем йышăнаççĕ, ĕçе вăра юсаса яраççĕ.

«Ударник» стена хаçачĕ кăçалхипе 13-мĕш çул тухать. Çак вăхăт хушшинче унăн авторитечĕ ӳсрĕ. Хаçата илемлĕ те яка чĕлхепе кăларма тăрăшаççĕ. Кашни номертех 10—12 пĕчĕк заметка вырнаçтараççĕ. Кăçал вăл 14 номер тухнă. Стена хаçачĕ агитатор пулса тăчĕ. Вăл колхозниксене фронтри пек ĕçлеме, фронта куллен пулăшма чĕнет. Вăл лайăх ĕçлекен колхозниксен примерĕсене пур колхозниксем хушшинче те сарса, мĕнпур ĕçлеме пултаракан сынсене ĕçе мобилизацилессишĕн кĕрешет. Çапла вăл колхоза çуракине хăвăртрах туса ирттерме пулăшрĕ. Колхоз çуракине хатĕрленнĕ пуçланă кунранпах стена хаçачĕ хăйĕн номерĕсенче уйхир ĕçĕсем çинчен умстатьясем çырса тынă. Кашни статьяра вырăнти фактсемпе пĕлсе усă курнă, ĕçе мĕнле йĕркепе тумаллине çутатса панă.

Кунсăр пуçне стена хаçачĕ хăйĕн кашни номерĕнчех фронтри боевой эпизодсене, земляксен çырăвĕсене çырса кăларать. Çакă вăра колхозниксене ырми-канми ĕçлеме хавхалантарать.

Н. ОРЛОВ,
Иртеменкассинчи ВЛКСМ пуçламăш организаци секретарĕ

СУД

Фронтовик çемьи çине чунсăрла пăхнăшăн

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Глинский фронтовикăн 5 сынран тăракан çемьине, эвакуаци йĕркипе килнĕскере, Альбусь-Сюрбеево ялсоветĕнчи «Красный воин» колхоза вырнаçтарнă пулнă. Глинский юлташăн çемьи—арăмĕ Екатерина Глинская, унăн амăшĕ Бубкова юлташсем колхоза 1942 çулхи ноябрь уйăхĕнче çитнĕ. Вĕсене Константинов колхозник патне вырнаçтарнă. Кунта вĕсем йĕркеллĕ пурăнайман. Çавăн пирки колхоз правленийĕ вĕсене сын çуртне пушă пӳрте вырнаçтарнă. Вăл пӳрт пурăнма юрăхлă пулман: пĕр хутлă чӳречерен, тирпейлĕ мар алăкран тата ытти шăтăк-çурăксенчен çил вĕрсе тăнă. Апла пулин те ялсовет исполкомĕн председателĕ А. Дмитриева, колхоз председателĕ Ф. Григорьев нимĕн те туман.

Глинский юлташăн çемьи вăл пӳртре нумаях та пурăнайман, чирленĕ. Пӳрт сивĕ пулни çинчен ял руководителĕсем пĕлнĕ, анчах вĕсем çак çемьен сывлăхĕ çинчен, ăна пулăшу парасси çинчен аса та илмен. Колхоз председателĕ Глинский юлташăн çемьине пăхма Е. Комиссарова колхозницăна хушнипех лăпланса ларнă. Ялсовет председателĕ Дмитриева: «Чирлĕ сынсене пăхасси манăн ĕç мар», тенĕ. Çапла вара, вĕсем пиллĕк уйăх хушшинче çак çемьери чирлĕ сынсем патне пырса та курман.

Ялти медицина пункчĕн фельдшерицин З. Симонова Глинский юлташăн çемьинчи чирлĕ сынсем хăйсене больницăна вырнаçтарма ыйтни çинчен пĕлнĕ, анчах вĕсен ыйтăвне пурнăçлама шутламан.

Çавнашкалах Глинский юлташăн çемьи Комиссарова колхозница урлă колхозран апат-çимĕç парса пулăшма ыйтнă. Анчах колхоз председателĕ Ф. Григорьев ку ыйту çине те чунсăрла пăхнă — вĕсене ырăш авăртмасăрах панă. Паллах, чирлĕ сынсем ăна авăртма пултараймаи, ырăша халĕ те авăртман-ха.

Фронтовиксен çемьисене пулăшмалли вунăкунлăхра Глинский юлташăн çемьине 140 килограмм çĕрулми пама йышăннă. Анчах 50 килограммне çеç леçсе панă.

Чирлĕ пирки ура çине тăрайман сынсене Комиссарова çĕрулми пĕçерсе панă. Глинский çемьи хăшпĕр вăхăтсенче çăкăрсăр ларни те пулнă. Шывшур вăхăтĕнче Комиссарова вĕсене таса мар шыв ĕçтернĕ. Çаксене пула Глинский юлташăн çемьи ура çине те тăраймиш пулать. Ут-пĕве сăпансем, тĕрлĕ шатрасем тухса пĕтеççĕ.

Кăçалхи апрелĕн 22-мĕшĕнче Бубкова чирпе больницăна леçнĕ хыççăн пĕр сехет иртсенех вилет.

Çак ĕçе Комсомольски районри халăх сучĕ вырăна кайса пăхса тухрĕ. Фронтовик çемьи çине çакнашкал тимсĕрле пăхнăшăн суд ялсовет председателĕ пулса ĕçленĕ А. Дмитриевăна колхоз председателĕнче ĕçленĕ Ф. Григорьева виçшер çул хушши, Е. Комиссаровăна икĕ çул хушши тата фельдшерица З. Симоновăна пĕр çул хушши тĕрмере хупса усрама приговор йышăнчĕ.

В. АНДРЕЕВ.

Ют çĕршывсенче

НИМĔÇ СТУДЕНЧĔСЕН ГИТЛЕРА ХИРĔÇЛЕ ШУХАШ КĂМĂЛĔСЕМ

ЛОНДОН, июнĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). „Френс“ хаçат студентсен фашистла организацийĕн Мюнхенра тухса тăракан „Ди бевегунг“ ятлă журналĕнче пичетленнĕ материалсен йĕрам татăкĕсене илсе пичетленĕ. Фашистсен журналне ирĕксĕрех çакна йышăнма тивнĕ: Германири университетсенче „шанчăксăр элементсем“ нумай. Вĕсем гитлерла режима хирĕç ĕçлеççĕ. Журнал шухăшĕпе, „вĕсем пулма пултарайман хыпарсем сарса çӳреççĕ“, заводсенче саботажла ĕçсем тума илĕртеççĕ, юрăхсăр хĕçпăшал туса кăларма чĕнеççĕ.

„Гестапо çывăрмасть“, „каникулсем вăхăтĕнче кашни студент çинчен тĕплĕ сведенисем пухнă“, тесе астутарать çав журнал. Унтан вăл çапла калать: государствăна тата гитлерла партие килĕштерсе тăман студентсене „çĕр çинчен шăлса тăкмалла“, тет.

МЕНЕ ТАТА ЭДЕР ШЫВĔСЕМ ÇИНЧИ ДАМБĂСЕНЕ ИШĔЛТЕРНИ

СТОКОЛЬМ, июнĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Шведсен „Нюа даглингер аллехаида“ ятлă хаçачĕ нумай пулмасть Германире пулнă пĕр çын каласа кăтартнине пичетлесе кăларнă. Англи авиацийĕ Германин Мене пе Эдер юханшывĕсем çинчи дамбăсене ишĕлтернипе пулнă сиенсем çинчен каланă май çав çын çакна палăртнă: шыв илнĕ район Эссенран пуçласа Гамма çитиччен сарăлса выртать. Зост хули патне нумай вăхăт хушши пачах та пыма май пулман.

Дортмундра шыв пĕр метр çӳллĕш хăпарнă. Дортмунд çывăхĕнчи домна кăмакисене шыв илнĕ, вара вĕсем сирпĕнсе кайнă. Вырăнти рудниксене шыв илнине пула тата шахтăсем йăтăнса аннипе рабочисем нумай пĕтнĕ. Гарденбергри рудниксем юрăхсăра тухнă. Спасательнăй станцисен оборудованийĕ шыв илнĕ самантра пĕтĕмпе тенĕ пекех пĕтсе ларнă. Спасательнăй командăсем катастрофа пулнă вырăнсене кирлĕ вăхăтра çитме пултарайман. Çавăн пекех чугунçул линийĕсем çинче те пысăк ишĕлӳсем пулнă.

Мене шывĕ çинчи плотина ишĕлсен, Рур районĕ ĕçмелли шывсăр тăрса юлнă.

Куракан çынсем каласа панă тăрăх, Дордтмундăн вăтаçĕрти пайĕ пĕтĕмĕшпех ишĕлнĕ. Хула хĕрри те ишĕлнĕ. Брательти аэродром бомбăсем пăрахнипе вăйлă сиенленнĕ, ăна пачах шыв илнĕ.

Бомбардировкăна пула Десс завочĕсен нумай цехĕсенче ĕç чарăнса ларнă. Дортмундăн çурçĕр пайĕнче И. Г. Фарбениндустри завочĕсем пысăк сиен тӳснĕ. Спасательнăй ĕçсене тума Рура 10 пин рабочи тата тыткăнри çынсене нумай янă. Анчах та тыткăнри çынсем нумайĕшĕ унтан тарнă.

Аргентинăри лару-тăру

АРГЕНТИНĂРА ÇАР ПРАВИТЕЛЬСТВИ ТУНĂ

НЬЮ-ЙОРК, июнĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви çапла пĕлтерет: Аргентинăра çар правительстви тунă. Правительство пуçĕнче президент пулса Раусон генерал тăрать.

Правительство хăйĕн политикине Америкăри ытти çĕршывсемпе килĕшсе тытса пыма пулнă, анчах та вăрçă тĕлĕшĕпе хальхи вăхăтра нейтралитет тытма пулнă.

НЬЮ-ЙОРК, июнĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Аргентина парламенчĕн депутачĕ, социалистсен партин лидерĕ Репетто, хальхи вăхăтра Нью-Йоркра пурăнаканскер, Аргентинăри восстани çинчен çапла каланă: „Аргентинăри ĕçсем тĕлĕшпе асăрханса калаçас пулать. Эпир çар лидерĕсен ушкăнĕ ирĕклĕ суйлавсем ирттерсе Аргентинăна халăх суйланă конституциллĕ президент парничен кĕтсе тăрăпăр“, тенĕ.

НЬЮ-ЙОРК, июнĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви Буэнос-Айресран пĕлтернĕ тăрăх, Раусон генерал хăй вăхăтлăх правительство пуçĕнче тăма килĕшменни çинчен пĕлтернĕ, „мĕншĕн тесен çĕнĕ кабинет составĕ тĕлĕшпе калаçса татăлма май пулмарĕ“, тенĕ вăл. Çар министрĕ Рамирес президент обязанноçĕсене хăй çине илни çинчен пĕлтернĕ. Рамирес çавăн пекех тата çакна пĕлтернĕ: çĕнĕ правительство присяга парасси июнĕн 7-мĕшĕнче пулаймасть, ăна малалла тăсмалла пулать, тенĕ.

КĔСКЕН

▲ Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенче 21 лагерьте тыткăна лекнĕ 36,678 çын пурăнать, вăл шутра нимĕçсем 22,110 çын, итальянецсем 14,516 çын, японецсем 52 çын шутланаççĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—67, редакци секретарĕн—4—26, парти пурнăç пайĕн—3—99 промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—23.

Типография № 1 Управления полиграф. промышленности при СНК ЧАССР Заказ № ... Ф. 6 53 84 п. в.